Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен районти канашлăвĕ умĕн

# Малаллах пăхни шанăç кӳрет

***Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен районти канашлăвне район администрацийĕн ларусен залĕнче февралĕн 20-мĕшĕнче пухма йышăнни пирки пĕлтернĕччĕ. Унччен вара вырăнсенче ферма ĕçченĕсемпе канашлусем пулса иртрĕç. Йăлана кĕнĕ тăрăх вĕсенче иртнĕ çулхи ĕç итогĕсене пĕтĕмлетрĕç, малашлăх тĕллевĕсене палăртрĕç.***

Акă Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн сысна фермин ĕçченĕсемпе пĕрле пухăнса канашланă чухне те ытти ыйтусемпе пĕрлех çак ыйтусемех тĕп вырăнта пулчĕç: 2007 çул итогĕсем, ĕç укçине ӳстересси, апла пулсан производствăна манех илер-ха. Унччен вăл уйăхне вăтам шутпа 2000 тенкĕ пулнă пулсан, халĕ ĕç укçи 4000 тенкĕне яхăн. Пĕтĕмпе вара ĕç укçи тӳлеме хуçалăхĕпе 4 миллион та 400 тенкĕ уйăрнă. Ку е вăл сăлтавсене пула вăхăтра тӳлейменнисем те пулкаланă ĕнтĕ. Апла пулин те хуçалăх парăмсене кая юлмасăр татма тăрăшать. Кунсăр пуçне май килнипе ĕçлекенсене пĕрлешӳллĕ хуçалăх тырă та уйăрса парать.

Йывăртарах пулин те, пушар машинине те тытса тăма тивет. Унсăр та май çук. Хĕллехи вăхăтра ялсенче çул уçса парасси те тăкаксăрах мар. Шывпа тивĕçтересси, шыв уçлакан башньăсе-





лалла аталантарасси, перекетлĕх, ку енĕпе халиччен усă курман майсем, кунранкун кивелсе пыракан техникăна çĕннисемпе улăштарасси т ыт. те.

Канашлура пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçи Владимир Славич Андреев ӳсен-тăран, выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илессипе хуçалăхра лару-тăру мĕнле пулни пирки цифрăсен чĕлхипе каласа пачĕ. Тĕрĕссипе ĕнтĕ малалла пачах куçман теме çук. Ӳсĕмсем чăнах та пур. Акă сысна пăхакансен ĕç укçине тытса тăрасси те хăш-пĕр çĕрти пек ял тăрăхĕсем çинче мар, хуçалăх ĕнси çинех ларассĕ тăкакĕсем.

Çакна ăнланса илес пулать пурин те. Ĕç укçине ăна, калăпăр, виçĕ хут ӳстерес тесе çырса хунипех хăпартма май çук вĕт-ха. Ĕç укçипе пĕрлех продукцине те ытларах туса илме тытăнас пулать. Акă сысна ферми 141 тонна продукци панă. Проект хăвачĕпе пăхсан вара ăна тепĕр виçĕ хута яхăн ытларах хатĕрлеме пулать.

Механизаторсем тĕлĕшпе те çавнах каламалла. Халĕ вĕсен уйăхри вăтам ĕç укçи 6 пин тенкĕпе танлашать. Майсем çук-и-ха çак хисепе 18 пин тенкĕне çитерме? Пур! Ăна валли мĕн тумалли те пурне те паллă. Ку вăл тухăçлăрах ĕçлесси, çунтармалли-сĕрмелли материалсене перекетлесси, кашни гектар пуçне ӳсен-тăран продукцине туса илессине ӳстересси, фермăсенче выльăх апачĕпе перекетлĕ усă курасси т. ыт. те. Кашни вак-тĕвек шутра. Пусран пуçтарăнать тенкĕ. Халĕ вара çакна пурте ăнлансах çитерейменни паллă.

Кивĕ техникăпа мала каяймăн тени те тĕрĕсех. Хуçалăхра вара мал курăмлă ĕçлени курăнать. Иртнĕ çул кăна 4 техника хатĕрĕ çĕнĕрен туяннă. Хаклăрах, паллах. Анчах та хакли хакне кăларать текен чăнлăха та манма кирлĕ мар. Кăçал та çĕнĕ техника туянас шухăшлă-ха хуçалăх ертӳçи Владимир Славич.

Хуçалăхра кашни производство подразделенийĕнчех малашне пăхса-сăнаса тăракансем, тепĕр майлă каласан, наблюдательсем суйлама палăртнă. Ку вăл ĕнтĕ йĕркелĕхе çирĕплетме, контроль витĕмне ӳстерессипе çыхăннă пулĕ. Сысна ферми тăрăх кун пек наблюдатель пулма ферма ĕçченĕсем А.А. Максимова шанчĕç.

Çав кун хуçалăхăн ытти выльăх-чĕрлĕх фермисенче те ферма ĕçченĕсемпе канашлусем иртрĕç. Унччен хине сӳтсе явнă тата малашлăх пирки калаçнă май тĕрĕс, лайăх сĕнӳсем те сахал мар пулчĕç. Вĕсене вара выльăх пăхакансем хăйсем сĕнеççĕ пулсан ку япăх мар. Апла пулсан хуçалăх шăпи, малашне мĕнле пурăнасси вĕсемшĕн ют мар. Ку вара чи кирли.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: епле майпа тухăçлăрах ĕçлемелли пирки канашлаççĕ ферма ĕçченĕсем; коллектив йывăрлăхсем умĕнче пуçа усас шутлă мар.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Музей уçрĕç

# Никама та манман, нимĕн те манăçман

Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам А.Г. Николаев летчик-космонавт ячĕллĕ шкулта ӳссе çитĕнекен çамрăк ăрăва тарăн пĕлӳ, çавăнпа пĕрлех çарпа патриотизмла воспитани парас, аслă ăрăвăн йăли-йĕркине упраса хăварас енĕпе сахал мар вăй хураççĕ. Ку тĕлĕшпе вара шкул музейĕн тӳпи те пысăк. Унăн ĕçне йĕркелесе пырассипе тăван ен культурине тата чăваш чĕлхине вĕрентекен Евгений Евстафьевич Ерагин чылай ĕçсем пурнăçланă. Вăл ертсе пынипе вĕренекенсем музей валли авалхи ĕç хатĕрĕсем, кĕпе-тумтир тата ытти тĕрлĕрен экспонатсем нумай пухнă. Çавăн пекех çывăхри ялсенче çуралса ӳснĕ паллă çынсем, граждан вăрçинчен тата çĕршывăн Аслă вăрçинчен таврăнманентешĕсен паттăрлăхĕ çинчен документ материалĕсемпе стендсем те пур.

Кăçалхи нарăс уйăхĕн 9-мĕшĕ те нумайлăха асра юлĕ. 1979-1989 çулсенче Совет Çарĕсем Афганистан вăрçине хутшăннине халалласа музейăн тепĕр пӳлĕмне уçрĕç. Ăна уçма вĕрентекенсемпе шкул ачисем пĕрле хамăрăн районтан тата Канашпа Шупашкар, Етĕрне хулисемпе районĕсенчен, Çĕнĕ Шупашкар хулинчен, Хĕрлĕ Чутай районĕнчен Афган вăрçинче пулнисем те хутшăнчĕç.

Чи малтанах вĕсем Афганистанра вилнĕ салтаксен ашшĕ-амăшĕсемпе, çывăх тăванĕсемпе Москакасси çывăхĕнчи палăк умĕнче митинг ирттерчĕç, вилнисене асăнса пĕр минут шăп тăчĕç, чăрăш лăссинчен тунă ярăмпа чечексем хучĕç.

Унтан вĕсем асăннă шкулта Афган вăрçине халалласа музей уçăлнă ятпа ирттернĕ митинга хутшăнчĕç. Ăна, кĕске сăмах каласа, шкул директорĕ Ирина Венедиктовна Осипова уçрĕ. Ун хыççăн Афган вăрçин ветеранĕ, Хĕрлĕ Çăлтăр орден кавалерĕ, Афганецсен Раççейри Союзĕн Чăваш Республикинчи организацийĕн ертӳçи Игорь Михайлович Кашаев сăмах илчĕ, совет салтакĕсен афган вăрçинчи паттăрлăхĕ çинчен каласа пачĕ, ачасене вĕренӳре ăнăçу, ырлăх-сывлăх сунчĕ, музей валли экспонатсем тата шкула баскетбол мечĕкĕсене парнелерĕ.

Хамăр районти Çеменкассинче çуралса ӳснĕ Игорь Валерьянович Михайлов, 1984-1986 çулсенче хĕсметре тăнăскер, Афган вăрçине хутшăннă, унта паттăрлăх кăтартнăшăн Хĕрлĕ Çăлтăр ордена тивĕçнĕ.

Унпа кӳршĕллĕ Сентимĕр ялĕнчи Николай Иванович Зайцев та 1981-1982 çулсенче Афган вăрçинче пулнă. Вĕсем музей уçма хутшăнса тĕрлĕрен экспонатсем, альбомсем парнелерĕç.

Митингра çавăн пекех Элĕкпе Муркаш районĕсен çар комиссарĕ А.Г. Прокопьев, район администрацийĕн тĕп специалисчĕ Г.Г. Быкова сăмах каларĕç, Галина Геннадьевна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ячĕпе музей уçма пысăк пулăшу панисен, патриотизмла воспитани ĕçне хастар хутшăннисен пĕр ушкăнне, çав шутра Н.И. Зайцева, Г.И. Соловьева, М.Ю. Кулакова, П.Г. Ботникова, В.Л. Пинарина, В.С. Рубцова, Н.В. Осипована – шкул директорне, Е.Е. Ерагина, депутатсен районти Пухăвĕн депутатне Н.Г. Ванеркина тата ыттисене Тав çырăвĕсем парса чысларĕ.

Афган вăрçине халалласа уçнă музей, тӳрех палăртмалла, экспонатсемпе пуян. 1979-1989 çулсенче пынă çак вăрçа пирĕн районтан 144 каччă хутшăннă, анчах та вĕсенчен çиччĕшĕ:

М.М. Самойлов рядовой,
А.М. Татаров сержант,
Н.А. Перцев сержант,
Ю.П. Тарасов сержант,
А.Н. Порфирьев рядовой,
Н.Ю. Михеев рядовой

тата В.П. Николаев летчик тан мар çапăçусенче паттăрла вилнĕ. Вĕсен ячĕсене ĕмĕрлĕхе асра тытма фотостенд йĕркеленĕ. Музейра воин-афганецсен паттăрлăхĕпе паллаштаракан документсемпе вĕсен çырăвĕсем тата ытти экспонатсем те сахал мар.

**А. ШАРИКОВ.**

Республика Президенчĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çырăва сӳтсе яватпăр

# Пуласлăх хамăр тăрăшнинчен килет

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

**Э.Л. Новикова, Чуманкасси ял тăрăхĕн специалисчĕ.**

– Чăваш Республикин Президенчĕн Çырăвĕпе тулли кăмăлпа паллашрăм. Чăннипех, мăнаçланмалăх пур пирĕн хамăр республикăра туса ирттернĕ ĕçсемпе. Ялта пурăннă май ялти проблемăсем çинче чарăнас килет. Малтан шутлама пултарайман çăмăллăхсемпе усă курма пултаратпăр-çке халь. Патшалăх паян çамрăксене, ялта пурăнакансене тавăрса памалла мар субсидисем парса пулăшать. Хамăр тăрăхра кăна пĕлтĕр 2 çемье, виçĕм çул 5 çемье усă курчĕ унпа. Пулăшу мар-и вара çакă. Ялта пурăнакан кашни пусне шутласа пӳрт лартма хатĕрленнине шутласан, çав тери пысăк телей ку.

Çулсем тунишĕн ял çыннисем мĕнле савăннине сăмахпа та каласа пама çук пулĕ. Малтан Соляное, унтан Карманкассине, пĕлтĕр Чуманкассине çити çул пулчĕ. Пылчăк çăрма пăрахрăмăр. Юмахри пек. Халь вара Исетерккĕре ял хушшине çул тăвас ĕççем пыраççĕ. Отарккăра çул сарма кирлĕ документсене хатĕрлетпĕр. Ялсем хитреленсе пыраççĕ. Темиçе çул каялла Отарккăра пекарня уçăлчĕ те миçе çын валли ĕç вырăнĕ тупăнчĕ. Тăрăшсан, палăртнă задачăна пурнăçлама пулать. Президент Çырăвĕ çакна тепĕр хут çирĕплетсе пачĕ. Пĕрле тăрăшма ӳркенмелле мар çеç.

**Т.З. Степанова, Сосновкăри тĕслĕхлĕ библиотека ертӳçи.**

– Президент Çырăвĕпе тĕплĕн паллашрăм. Тĕрĕссипе каласан, эпĕ Николай Васильевич мĕнле ертсе пынипе яланах мăнаçланнă. Мĕн тĕрлĕ ырă улшăнусем пулчĕç республикăра. Вăл пире сӳрĕклĕхрен вăратать, ĕçлеме хистет. Тĕслĕхлĕ библиотекăсем тунинех куç умне кăларар-ха. Кĕске вăхăтрах пĕрин хыççăн тепри вĕсен шутне кĕчĕ. Пирĕн районта вĕсем 30 çитрĕç. Паянхи кун ыйтакан компьютерсемпе ытти оборудованисем вырнаçтарнипех тĕслĕхлĕ пулса каймасть-çке-ха. Вырăнсенче те хытах чупкалама тиврĕ. Тăрăшсан, вырăнтан тапрансан, çитес çĕре çитме пулнине хамăрах туйса илтĕмĕр. Хамăр пултарулăха ытларах шанма пуçларăмăр.

Тепĕр паллă самант çинче чарăнас килет. «АПК аталантарасси» наци проекчĕпе ялта пурăнакансем мĕн чухлĕн илчĕç çăмăллатнă кредитсене. Кун пекки халиччен пулман вĕт. Ял çыннисем ал-ура çавăрса ячĕç, ял хуçалăх продукцине ытларах туса илме пуçларĕç. Апла пулсан вĕсене пуçтарса вырнаçтармалли пĕр-пĕр цех вырăнта уçсан аван пулмалла та. Ку та хамăр енчен пуçаруллăрах çынсем кирли пирки калать пулĕ. Вара ун чухне ялти ĕççĕрлĕх проблеми те чакĕччĕ. Паян çамрăксем хăйсен профессийĕпе ĕç тупаймаççĕ. Президент хăйĕн Çырăвĕнче ĕççĕрлĕх проблемине татса парас çул-йĕре те палăртать. Палăртать пулсан, çапла пулать те. Апла пулсан, пирĕн пурнăçра ырă улшăнусем татах та ытларах пулмалла. Шанăç парать Президент çырăвĕ. Ĕçлес кăмăл та ӳсет.

**Л. ПАВЛОВА**
**калаçнă.**

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# *Лайăх вĕренсен малалла çул уçă*

Шкул пĕтерсен ăçта вĕренме каймалла-ши? Мĕнле ĕçе вырнаçмалла-ши? Çак ыйтусем пур шкул ачине те кăсăклантараççĕ.

Пирĕн ĕçе çăмăллатма 10-мĕш класс ертӳçи Н.Н. Замятина Чуманкасси шкулне вĕçленĕ ачасене тĕл пулăва чĕнчĕ. Студентсемпе тĕл пулмалли куна ачасем чăтăмсăррăн кĕтрĕç. Уроксем пĕтсен вĕренекенсем кабинета пуçтарăнчĕç.

Тĕл пулăва тăватă студент килчĕ. Вĕсем: Н. Сергеева, О. Маркова, О. Никитин, А. Михайлова. Пире вĕсен пурнăçĕ интереслентерчĕ. Студентсем вара пире хăйсен вĕренӳ заведенийĕсемпе паллаштарчĕç. 10-мĕш класс ачисем вĕсене тимлĕ итлерĕç, ыйтусем пачĕç.

Эпир студент пурнăçĕ шкул пурнăçĕнчен уйрăлса тăнине ăнлантăмăр, пушă вăхăт та сахал пуласси не туйрăмăр.

Малашнехи пурнăç шкулта мĕнле вĕреннинчен килет. Çакна эпир Олеся Маркова тĕслĕхĕ çинче курса ĕнентĕмĕр. Вăл шкула кĕмĕл медальпе пĕтернĕ. Олеся Мускаври Пичет университетĕнче вĕренет. Тăрăшса вĕренсен унта та çитме пулать иккен.

Калаçу усăллă иртрĕ, пурне те килĕшрĕ. Хамăр та студентсен çулĕ çине пуссан шкул ачисене студент пурнăçĕпе паллаштарăпăр, сĕнӳсем парăпăр.

**О. ПАВЛОВА,**
**10 «а» класс.**

Чуманкасси шкулĕ.

**ПОПРАВКА**

В районной газете от 9 февраля 2008 года опубликовано решение Моргаушской территориальной избирательной комиссии №40/1. Допущена опечатка: «О количественном составе участковых избирательных комиссий по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации пятого созыва», следует читать: «О количественном составе участковых избирательных комиссий по выборам Президента Российской Федерации».

**Моргаушская ТИК.**